# ÇĂЛТĂРСЕМ ПАТНЕ ÇУЛ

/Пуçл. малтанхи номерсенче/

Туссем «Дейин» ятлă кафене кĕчĕç. Унта вĕсем кĕтесри сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕç, коктейль илчĕç.

– Арабелт, эсĕ мана темĕн каласа парасшăнччĕ,– аса илтерчĕ Магретта.— Астăватăпха, итле, Валаси çинче темле ăнланмалла мар япаласем пулса иртрĕç. Мана каласа панă тăрăх, виçĕ кун каялла унта Оралган планетинчи элчĕ килнĕ, чăн тĕллевне эпĕ пĕлеймерĕм. Хăй каланă тăрăх, вăл Валаси çине мирлешме килнĕ. Эпĕ ăна ĕненместĕп,— терĕ Арабелт.

— Чăнах та, тĕлĕнмелле япала, Оралган патши нихăçан та тĕллевсĕр мирлешмест,— тĕлĕнсе хушрĕ Магретта. Ваньăпа Коля кушакпа Арабелт калаçнине хăлхана та чикмерĕç, вĕсем кунти çимĕçпе апатланчĕç.

— Паянах Валассине çул тытатпăр! Эпир унта мĕнле çитĕпĕр, çапла планетăна хăвăрт çăлса хăварăпăр,— тăсрĕ калаçăва Магретта.

— Эпĕ те сирĕнпе пырăп,— терĕ Арабелт.

— Юрĕ. Коля, Ваня, атьăр, пирĕн васкамалла!

Нимĕн те ăнланман арçын ачасем кушакпа Арабелт хыççăн чупа-чупа пычĕç.

— Магретта, ăçта васкамалла?— ыйтрĕ Ваня.

— Халĕ калама путараймастăп,— хуравларĕ кушак.

Космос карапĕ патне çитсен вĕсене кĕтмен хăнасем кĕтсе илчĕç.

— Кам эсир? Ăçтан?— хытарса ыйтрĕ пĕр салтак.

— Эпĕ Магретта, Валаси планетинчен.

— Эпĕ Коля.

— Эпĕ Ваня.

— Эпĕ Арабелт — Мерзимин патшин ывăлĕ.



Салтак хăйăлти тискер сасăпа:

— Пĕлетĕн-и эсĕ, хăвна Арабелт тесе чĕннĕшĕн, пире суйнăшăн мĕн пулассине?! Молрат, Арфен, ярса тытăр çак шпионсене, вĕсем Оралганран!

— Чим, чим!— терĕ Арабелт,— эпĕ суймарăм!

— Атя, ут-ут! Оралган йытти!— шăл витĕр каларĕ салтак.

Юлташсене салтаксен карапне çавăтса кĕрсе кайрĕç...

**Дима СОКОЛОВ, 9 класс**

**/вĕçĕ çитес номерте/**

---

# ЁМĔРЛĔХ ÇИНЧЕН ШУХĂШСЕМ...

**Люда Замятина, 6б класс, Калайкасси шкулĕ**

**ЭРЕШМЕНСЕНЕ ВĔЛЕРМЕ ЮРАТЬ**

Ман шутпа, çынна вĕлерни пĕр енчен — çылăх. Мĕншĕн тесен хăшпĕр çынсем пулман пулсан пирĕн пурнăç юхăнса кайнă пулĕччĕ. Тĕслĕхрен: президентсем, тренерсем, ученăйсем. Вĕсемсĕр пурнăç япăх пулма пултарать. Çавăн пек çынсем пурнăçа йĕркелесе пыраççĕ. Тепĕр енчен çынсене вĕлерни çылăх мар, мĕншĕн тесен вăрçăра тăшмансене вĕлермелле. Унсăр пуçне çĕр çинче питĕ япăх çынсем нумай. Вĕсем айăпсăр çынсене вĕлерсе, вăрласа çӳреççĕ. Халăх вĕсене «выльăх» тесе калать. Ман шутпа, вĕсене çакăншăн вĕлермелле.

Эрешмене, чĕрĕ чуна вĕлерни киревсĕр ĕç мар. Хăш-пĕрисем эрешмене



вĕлермесен çылăх пулать теççĕ. Ман шутпа, эрешменсене вĕлерме юрать.

**Света Петрухина, 6б класс, Калайкасси шкулĕ**

**ÇЫННА ВĔЛЕРНИ — ÇЫЛĂХ.**

Эрешмене /е кирек хăш чĕр чуна/ вĕлерни киревсĕр ĕç-и?

Çынна вĕлерни, ман шутпа, çылăх. Эрешмене вĕлерни, ман шутпа, çылăх мар. Ваттисем каланă тăрăх, эрешмене вĕлерни çылăха каçарттарни кăна пулать. Вĕсем эрешмен кари туса тултараççĕ, кил-çурта вараласçĕ. Анчах хăш-пĕр эрешмен кирлĕ пулма пултарать. Нумай чухне çынсем вĕсене хăранипе вĕлереççĕ.

**Виталина Пажданова, 6 б класс, Калайкасси шкулĕ**

**КИРЕВСĔР ĔÇ**

Çынна вĕлерни — çылăх. Мĕншĕн тесен çынсем ĕçлеççĕ, тăрăшаççĕ, эрешменсем вара нимĕн те тумаççĕ. Эпир çакăншăн кураймастпăр вĕсене.

Эрешменсене пӳрт тавралла кĕртме тăрăшмалла мар. Эрешменсем эрешмен карисем туса çӳреççĕ, вĕсем хыççăн тирпей-илем кĕртсе пĕтерме май çук.

Çынна вара вĕлермелле мар, мĕншĕн тесен вĕсем çут çанталăкшăн тăрăшса пурăнаççĕ, хăйсене валли те усă тăваççĕ. Эрешменсене вĕлермелле, çынсене упрамалла. Этеме вĕлерни — çылăх.

**Ирина Иванова, 6 б класс, Калайкасси шкулĕ**

**ÇЫННА ВĔЛЕРНИ — ÇЫЛĂХ**

***Эрешмене /е кирек мĕнле чĕр чуна/ вĕлерни киревсĕр ĕç-и?***

Çынна вĕлерни, ман шутпа, çылăх. Мĕншĕн тесен çынна вĕлернишĕн тĕрмене лартаççĕ. Çавăнпа та ваттисем калаççĕ: «Этем — нумай, çын — сахал». Çынсене вĕлермелле мар.

Хăшĕ-пĕри эрешменсене вĕлермелле мар тет. Эрешменĕсем вара наркăмăшлисем те пулаççĕ, çынсене вĕлереççĕ.

Ваттисем каланă тăрăх, эрешменсене вĕлермелле мар. Мĕншĕн тесен эрешменсем шăнасене тытаççĕ. Эрешменсем тискер пулсан та вĕсене вĕлерме юрамасть.

# ЫРКĂМĂЛЛĂХ МАРАФОНĔ СТАРТ ИЛЧĔ

Чăваш Республикинче «Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн» ыркăмăллăх марафонĕ пырать.

Ун витĕмĕпе нарăсăн 19-мĕшĕнчен пуçласа пуш уйăхĕн 19-мĕшĕччен Муркаш районĕнче социаллă тевĕшпе хӳтлĕхе тивĕç çемьесемпе нуша куракан çемьесене пулăшас акци иртет.

Марафон тĕп задачисем: тăлăх ачасене, нуша куракан çемьесене, ухсах-чăлах ачасене укçа-тенкĕпе, кĕпе-тумтирпе тивĕçтересси.